Çĕнтеръ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

71 (8638) № ✻ Шăматкун, 2018 çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 22-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Муркаш районĕ черетлĕ хут Раççей шайĕнче палăрчĕ

«Бюджет» журнал тата Раççей финансисчĕсен пĕрлешĕвĕн пуçарăвĕпе 2007 çултанпах Раççей Федерацийĕн вырăнти хăй тытăмлăхне аталантарассин ыйтăвĕсемпе пĕтĕм Раççейри фокаш районĕ кăçалхи конкурсра 3 степень дипломне тивĕçнĕ.

Çавна май форумра Р. Тимофеев муниципалитета инвестицисем явăçтарасси пирки тухса калана, «Сеспель» пĕрлешӳпе çыхăнса çĕленин опычĕпе, пысăк инвестици проектне пурнăçлас тĕллевпе предприятие 10 га майлă çĕр лаптăкне регион саккунĕсен пуххипе килĕшӳллĕн арендăна суту-илӳсĕр панипе паллаштарнă. Çавăн пекех Р. Тимофеев хăйĕн сăмахĕнче ял тăрăхĕсен бюджечĕсене пурнăçласссипе çыхăннă проблемăсемпе ыйтусене палăртнă, ĕç укçине официаллă майпа тӳлемесĕр пурнăçлакан предприниматель ĕçĕшĕн административлă ответлăха ӳстерме сĕнсе калана.

Хамăр инф.

Сăн ӳкерчĕкре: муркашсене чысланă самантра – РФ финанс министрĕн çумĕ А. Лавров, Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, район администрацийĕн финанс пайĕн ертӳçи Р. Ананьева тата РФ Патшалăх Думин депутачĕ В. Евланов.

Районта

Профилактика кунĕсем пуçланчĕç

Районта профилактика кунĕсен иккĕмĕш тапхăрĕ пуçланчĕ. Йăлана кĕнĕ йĕркепех çак кунсенче профилактика субъекчĕсем ял тăрăхне çитсе унти йывăр лару-тăруллă çемьесене, тĕрлĕ учетра тăракансем патне тĕрĕслевпе çитеççĕ, асăрхаттару калаçăвĕсем иртереççĕ.

Çак эрнере профилактика кунĕсем Турай тата Ильинка ял тăрăхĕсенче пулчĕç. Ильинка ял тăрăхĕнчи профилактика кунĕн пĕтĕмлетĕвне район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев хутшăннă. Вырăнти асăрхаттару ĕçне общественноçа ытларах явăçтарма сĕннĕ.

Нумаях пулмасть Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхĕнче ĕçлеме тытăннă М. Соколова профилактика ĕçне ирттерессипе ыттисен опычĕпе паллашасса пĕлтернĕ.

Юсав ĕçĕсем вĕçленнĕ

Нумай хваттерлĕ çуртсенчи пĕрлехи пурлăха капиталлă юсассин республика программине пурнăçланă май, Муркаш районĕнче нумай хваттерлĕ 5 çуртра юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ.

Кусем: Мăн Сĕнтĕрти Новая урамри 5-мĕш, Муркашри Восточная урамри 6-мĕш, Муркашри Октябре 50 çул урамри 30, 40 тата 42-мĕш çуртсем.

Вĕсенче капиталлă юсав тума палăртнă тĕрлĕ ĕç пурнăçланă: пĕрисенче çивиттине юсанă, теприсенче электричествăпа, ăшăпа тивĕçтерекен, шыва юхтарса кăларакан тытăмсене тĕпрен юсанă.

Урам кунĕнче савăннă

Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Отаркка ялĕнче урам кунĕ иртнĕ. Ăна Лесная урамра пурăнакансен пуçарăвĕпе хатĕрлесе йĕркеленĕ.

Уява пухăннисене ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Белов саламласа, кун пек уявсем çынсене пĕр чăмăра пĕрлештернине палăртнă. Ялта юлашки вăхăтра туса ирттернĕ калăпăшлă ĕççене уйрăмах активлă хутшăннисене Тав çырăвĕпе чысланă.

Уява пынисем «Пирĕн кулленхи пурнăç» ятпа хатĕрленĕ сăн ӳкерчĕксен стенчĕпе паллашнă, хаваслă конкурссене хутшăннă, концерт курса савăннă.

Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.

Ĕçлĕ визит

Муркашра – федераци тĕп инспекторĕ

Чăваш Республики тăрăх федераци тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров Муркаш районĕнче ĕçлĕ визитпа пулчĕ

Чăваш Республики тăрăх федераци тĕп инспекторĕ Г. Федоров районти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх объекчĕсене хĕллехи хутса ăшăтмалли тапхăра хатĕрлессипе тĕплĕнрех паллашас тĕллевпе сентябрĕн 19-мĕшĕнче килнĕ. Çавна май вăл район администрацийĕн ларусем ирттермелли залĕнче канашлу ирттерчĕ.

Çавăн пекех Муркаша Ростехнадзорăн Атăлçи управленийĕн патшалăх тĕп инспекторĕ В. Ярукин, Чăваш Ен строительство министрĕн çумĕ А. Шевлягин, республикăри пурăнмалли çурт-йĕр патшалăх инспекцийĕн ертӳçи В. Кочетков килсе çитрĕç.

Канашлăва район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – капиталлă строительствăпа общество инфраструктурине аталантарассин пайĕн пуçлăхĕ А. Матросов хутшăнчĕ, район прокурорĕ С. Павлов тата пурăнмалли çурт-йĕр сферинчи ответлă ĕçченсем те хутшăнчĕç.

Канашлура палăртнă тăрăх, хутса ăшăтмалли тапхăра хатĕрленессинче Чăваш Республикинче йĕркене пăснă 276 тĕслĕх тупса палăртнă, çавна май должноçри 20 çынна тата 4 организацие явап тыттарнă.

Республика представителĕсем Муркаш районĕнчи ку тĕлĕшри лару-тăрупа пысăк асăрхаттарусем пулманнине пĕлтернĕ. Нумай хваттерлĕ 27 çурта централизациленĕ мелпе хутса ăшăтма хатĕррине, çавăн пекех районти пур социаллă учреждени те çак тапхăра хатĕррине палăртрĕç.

А. Матросов хутса ăшăтмалли тапхăра хатĕрленнипе пĕрлех энергоресурссемпе усă курнăшăн тӳлевсене вăхăтра татса пырас ыйтăва та тимлĕхре тытнине пĕлтерчĕ.

Канашлура районти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх сферинче çитес вăхăтра татса памалли ыйтусем çинче те чарăнса тăчĕç.

Хамăр инф.

26 СЕНТЯБРЯ – ПРИЕМ ВРАЧА-ОФТАЛЬМОЛОГА
Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 15
Запись
по тел. 8-967-475-87-57.
Имеются противопоказания. Проконсультируйтесь со специалистом.
3-5.

Саламлатпăр

Хаклă мăшăра, аннене, хисеплĕ хунямана, юратнă кукамая, ăшпиллĕ асаннене, ырă кăмăллă тăхлачăна, аппана, йăмăка, тăвана – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Алевтина Ивановна АЛЕКСАНДРОВĂНА** юбилей ячĕпе – 60 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан ăшă та çепĕç сăмахсемпе саламлатпăр.

Хаклă çыннăмăр! Сирĕн кил-çуртра килĕшӳпе туслăх хуçаланччăр. Чĕрӳнте юрату, чунунта канлĕх, кĕлеткӳнте сывлăх, ик куç тулли телей, кĕсье тулли укçа пултăр. Хăлхусем яланах ăшă та савăнăçлă хыпарсем çеç илтчĕр. Урусене чупса çӳреме Турă çăмăллăх патăр. Аллусенче яланах чечек çыххи пултăр. Тӳпери çут çăлтăрсем пек çулу ялан çутă та таса пултăр. Турă пиллесе панă кунсем савăнăçпа тата телейпе тулччăр!

60 çулĕ сисĕнмерĕ, тăчĕ юлчĕ хыçала,
Ят-суму çĕре ӳкмерĕ, хисепре эс ял-йышра.
Пул телейлĕ те хаваслă, Турă патăр сывлăхне,
Ырă, ăшă, тараватлă чунупа савсам пире.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ачисем, кĕрӳшĕ, кинĕсем, мăнукĕсем тата çывăх тăванĕсем.

Пирĕн хаклă та юратнă çыннăмăра – Тушкасси ялĕнче пурăнакан **Людмила Ивановна ЧЕРНОВĂНА** 80 çул тултарнă ятпа ăшшăн, чун-чĕререн саламлатпăр. Чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх сунатпăр. Мĕн шутланисем пурнăçланса пыччăр. Турри вара сана пире савăнтарса пурăнма тата нумай-нумай çул усратăр.

Ăшă салампа: пиччĕшĕн хĕрĕсем тата вĕсен çемйисем.

Çатракасси вăтам шкул коллективĕ çак шкулта нумай çул математика учителĕнче ĕçлекен пирĕн хаклă ĕçтешĕмĕре **– Любовь Римовна САВЕЛЬЕВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлать. Юман пек çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, вăрăм кун-çул, телей сунать. Хăйĕн пĕтĕм пурнăçне вăл ачасене вĕрентессине халаллана. Малашне те ăна эпир ĕçре пысăк çитĕнӳсем сунатпăр. Çемьере яланах килĕшӳ, юрату, ырă кăмăллăх хуçаланччăр.

Салампа: Çатракасси шкул коллективĕ.

Поздравляем **РАЙКОВУ Зою Ивановну** из с. Б. Сундырь с юбилеем. Милая, дорогая мама, желаем тебе жить долго и счастливо и радоваться жизни. Пусть каждый день твой будет наполнен светом и теплом, и пусть твои глаза всегда светятся счастьем. Благодарим тебя за заботу, теплоту души и золотое сердце. Мы очень сильно тебя любим, дорожим и ценим.

Мы спешим тебя поздравить с юбилеем!
Пусть душа твоя, мамулечка, поет.
Пусть на сердце будет лишь светлее,
Жизнь пускай улыбками цветет.
Окружают пусть лучи покоя
И сердечного прекрасного добра.
Поздравляем мы тебя со всей душою!

Твои внуки, дети, вся твоя семья.

Уйкас Янасалта çуралса ӳснĕ, унтах пурăнакан **Тамара Николаевна НИКОЛАЕВĂНА** 80 çулхи сумлă юбилейпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр.

Вăрăм ĕмĕр, канлĕ те лăпкă ватлăх, çутă та савăнăçлă кунсем сунатпăр. Эсĕ чылай çул тĕп стройкăсенче каменщицăра вăй хутăн, ырми-канми тăрăшрăн. Республикăри паллă предприятисене хăпартма тӳпе хыврăн. Ĕмĕр тăршшĕпех йывăр ĕçре тăрăшнине пăхмасăрах, эсĕ паян та вăр-вар, тирпейлĕ те тарават. Яланах çапла ĕçчен те ырă кăмăллă пулма Турри сана вăй-хăват парса тăтăр. Эпир сана хисеплетпĕр, пире пулăшса пынăшăн сан умра пуç тайса тав тăватпăр.

Ăшă салампа: пиччĕшĕн ачисем çемйисемпе тата инкĕшĕ.

Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче

Депутатсен черетлĕ ларăвĕ

Сентябрĕн 21-мĕшĕнче депутатсен район Пухăвĕн черетлĕ 32-мĕш ларăвĕ ĕçлерĕ.

Ларăва район пуçлăхĕ – депутатсен район Пухăвĕн председателĕ И. Николаев ертсе пычĕ. Вăл сентябрĕн 9-мĕшĕнче иртнĕ хушма суйлавра депутатсен район Пухăвĕн депутачĕсене суйланнă А. Строгановпа В. Федорова саламларĕ, вĕсене депутат удостоверенийĕсем пачĕ.

Депутатсем ларура чылай ыйтăва пăхса тухрĕç.

Малтан РФ Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн çак тапхăрти ĕçне сӳтсе явăрĕç. Кун пирки пай ертӳçи В. Степанов пĕлтерчĕ.

Районти муниципаллă пурлăха 2019 çулта приватизацилемелли прогноз планне йышăнчĕç. Планпа район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн ертӳçи А. Семенова паллаштарчĕ.

Район территорийĕнче çурт-йĕр тата çул-йĕр тăвас ĕçсем епле пынине пăхса тухрĕç. Кун пирки район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – капиталлă строительство тата общество инфраструктурине аталантарассин пайĕн ертӳçи А. Матросов калаçа пачĕ.

Малалла бюджет ыйтăвĕсене сӳтсе явăрĕç. Вĕсемпе районти финанс пайĕн ертӳçи Р. Ананьева паллаштарчĕ. Сăмах районăн 2018 çулхи тата 2019 тата 2020 çулсенчи тапхăрти бюджетне улшăнусем кĕртесси, бюджет хутшăнăвĕсене йĕркелесси, бюджетсем хушшинчи трансфертсене йĕркелесси, бюджета шайлаштарасси пирки пычĕ.

Çавăн пекех ларура район администрацийĕн пуçлăхĕн должноçне йышăнма конкурс ирттермелли çĕнетнĕ положение çирĕплетрĕç. Унпа район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, правăпа тивĕçтерес тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе ĕçлекен пайĕн ертӳçин çумĕ М. Петрова паллаштарчĕ.

Ларура ытти ыйтăва та пăхса тухрĕç. Сӳтсе явнă ыйтусемпе тивĕçлĕ йышăнусем турĕç.

Лару ĕçне район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев хутшăнчĕ, район аталанăвĕн ыйтăвĕсемпе тухса каларĕ.

Пĕрлехи информаци кунĕ

Пенси ыйтăвĕ те, вырăнти ыйтусем те кăсăклантараççĕ

Пенси системине кĕртме палăртакан улшăнусем, йăла каяшне тирпейлессинчи тата уншăн тӳлессинчи çĕнĕлĕхсем, хĕллехи хутса ăшăтмалли тапхăр, аналоглă телевиденирен цифра телевиденийĕ çине куçасси – çак тĕп темăсемпе çыхăннă информаципе паллаштарма Пĕрлехи информаци кунĕнче пирĕн района килнĕ ĕç ушкăнĕсем тĕрлĕ ял тăрăхне çитрĕç.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн председателĕн çумĕ Александр Федотов тата выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин ертӳçи Николай Яковлев Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕç. Тĕл пулусене ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Геннадий Жуков та хутшăнчĕ.

Тĕл пулусем «Герой» хуçалăхра ĕçлекенсемпе, Шурча, Ярапайкасси тата Сыпай шкулĕсен коллективĕсемпе, çавăн пекех культура ĕçченĕсемпе иртрĕç.

Хальхи вăхăтра пурне те кăсăклантаракан ыйту – пенси тытăмне улшăнусем кĕртесси. Çавна май Александр Федотов кашни коллективрах пенси тытăмĕнчи улшăнусене хальтерех кĕртесси мĕншĕн пурнăç ыйтни пулса тăнине тĕплĕ ăнлантарчĕ. Ку ыйту çĕршыв ертӳлĕхĕ умне иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче тухса тăнине, анчах ăна çав пăтранчăк вăхăтпа хавшак экономика тапхăрĕнче пурнăçлама май килменни çинче те чарăнса тăчĕ.

Пенси системинче тума палăртнă улшăнусем çинчен каласа панине пур çĕрте те тимлĕ итлерĕç. Тĕл пулусем куçа-куçăн уçă калаçу мелĕпе иртнĕрен тĕплĕнрех ăнлантарса памалли ыйтусемпе те пуян пулчĕç.

Çапла педагогсем, сăмахран, «выслугăпа» пенсие тухмалли йĕрке сыхланса юлассипе кăсăкланчĕç.

Александр Федотов çак çăмăллăх, федераци тата регион шайĕнчи сыхланса юлакан ытти çăмăллăх пирки те пĕлтерчĕ. Вăл Раççей пенси саккунĕсен пуххинче «предпенсионный возраст» çĕнĕ ăнлав тухнине палăртрĕ. Кĕскен каласан, çак тапхăр çыннăн пенсие тухичченхи пилĕк çулĕпе танлашать. Çак ăнлава кĕртни пулас пенсионерсене ĕçлес тĕлĕшĕнчен те хушма хӳтлĕхпе тивĕçтерме пулăшмалла.

Тепĕр самант пирки те каласа хăварас кăмăл пур. Ярапайкасси тăрăхĕнче пурăнакан хĕрарăмсем арçынсен пенси вăхăтне 65 мар, 63 çул тăвас сĕнӳ пуррине те палăртрĕç. Çакна вĕсем арçынсем пурăнса çитерекен вăтам çул ӳсĕмĕ пĕчĕккипе çыхăнтарчĕç.

Информаци кунĕ Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи çынсене вырăнта татса памалли ыйтусем канăççăрлантарнине те кăтартса пачĕ. Çынсем Шурчара çĕнĕ урам хăш вырăнта пулассипе, шывпа тивĕçтерессипе тата уншăн тӳлессипе, урамсенче электричество çутипе тивĕçтерессипе кăсăкланчĕç. Ку ыйтусене ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Геннадий Жуков хуравларĕ.

Сыпай шкулĕнче иртнĕ тĕл пулу вара ыттисенчен кăшт уйăлса тăчĕ. Кунта район администрацийĕн вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ Зоя Дипломатова шкул коллективне çав кунран çĕнĕ ертӳçĕ Михаил Николаев ертсе пыма тытăннине пĕлтерчĕ.

Унччен район администрацийĕн физкультурăпа спорт секторĕн ертӳçинче тимленĕ Михаил Николаев педагогсен коллективĕпе тата вырăнти халăхпа пĕр чĕлхе тупса Акуча тăрăхне аталантарма май килнĕ таран тăрăшма шантарчĕ.

Н. НИКОЛАЕВА.

Пенсионерсен активлăхĕ ӳссе пырать

Раççей Федерацийĕн Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн ертӳçи Роза Кондратьева ертсе пыракан ушкăн Муркаш ял тăрăхĕнче пулчĕ, ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Андрей Мясниковпа хăш-пĕр ыйтăва сӳтсе явнă хыççăн «Росгосстрах» ПАО СК Чăваш Республикинчи страхлакан пайăн Муркашри филиалĕн коллективĕпе тĕл пулу ирттерчĕ.

Чи малтанах асăннă филиал ертӳçи Валерий Вязов ĕç ушкăнне коллективăн пĕтĕмĕшле ĕçĕ-хĕлĕпе кĕскен паллаштарчĕ. Валерий Иванович каланă тăрăх, коллективăн ĕç кăтартăвĕ республика шайĕнче те лайăх-хисен шутĕнче, çынсен тăрăшулăхĕпе ĕçлес кăмăлĕ пысăк.

Страхлакан агентсен йышĕ 41 çынран тăрать, унсăр пуçне специалистсем пур. Пĕтĕмĕшле илсен, ĕç коллективĕнче пенсие тухма хатĕрленекен тата пенси çулĕнчи çынсем тимлеççĕ, çавăн пекех çамрăкраххисем те тăрăшаççĕ. Çавăнпа та информаци кунне кĕртнĕ ыйту – пенси системине кĕртме палăртакан улшăнусем пирки Раççей Президенчĕ В. Путин хăйĕн шухăшне палăртни вĕсемшĕн кăсăклă пулчĕ.

Пенси системипе çыхăннă ыйтупа Роза Кондратьева тĕплĕн паллаштарчĕ. Вăл палăртнă тăрăх, çитес вăхăтра пенси системине кĕртме палăртнă тĕп улшăну çынсем пенсие тухас çула ӳстерессипе çыхăннă. Ăна уйрăмах пенсионерсен пурнăç условине лайăхлатассине вăя кĕртме палăртнă.

Правительство сĕннипе пенсие тухас çула тапхăрăн-тапхăрăн ӳстернипе арçынсем 65 çулта, хĕрарăмсем 63 çулта тухма йышăннăччĕ. Çĕршыв ертӳçи ку тĕлĕшпе хăйĕн шухăшне палăртрĕ, çапла вара хĕрарăмсем пенсие тухас çулне виçĕ çул кĕскетсе 60 çула хăварма сĕнчĕ.

Пенсие тухас çула ӳстерни 5 ача пăхса ӳстернĕ амăшĕсене, инвалид ачаллисене тата хăш-пĕр категорие пырса тивмест.

Патшалăх шайĕнче йышлă ачаллă çемьесене тимлĕх уйăрнă май, нумай ачаллă амăшĕсене пенсие срокран маларах тухма май туса пама сĕнчĕ. Ку категорие 3 тата 4 ачаллисем те кĕреççĕ. Çĕршыв ертӳçи сĕннĕ тăрăх, ĕçлекенсен уйрăм категорийĕсем валли пенсие маларах тухмалли майсем сыхланса юлмалла.

Ял пурнăçне сыхласа хăварас тата ял хуçалăхĕнче вăй хуракансем валли уйрăм çăмăллăх кĕртме палăртнă. Ял хуçалăхĕнче ĕçлесе 30 çултан кая мар стаж пухнă çынсем валли те çăмăллăхсем пулĕç.

Çĕршыв пуçлăхĕ пенси çулне тухма çитсе пыракан çынсен ĕç рынокĕнчи интересĕсене хӳтĕлеме, ку енĕпе хушма гарантисем пăхса хуни вырăнлă пулнине палăртать. Çавна май Чăваш Республикинче пенсие тухма хатĕрленекен çынсене хӳтĕлес тĕлĕшпе 2018–2021 çулсем валли мероприятисен планне çирĕплетнĕ. Çак ӳсĕмри çынсем ĕç вырăнĕ шыранине мониторинг туса пыраççĕ. Çулталăк пуçланнăранпа ĕçпе тивĕçтерекен центра асăннă категорири 1037 çын пулăшу ыйтма пынă, вăл шутран 701 çыннăн ыйтăвне тивĕçтернĕ, професси пĕлĕвне 51 гражданин илме пултарнă.

Çавăн пекех пысăк ĕç стажĕ пухнисем пенси çулне çитмесĕрех пенсие тухма пултараççĕ. Хĕрарăмсен вăл 37 çулпа, арçынсен 42 çулпа танлашмалла.

Пенси системине кĕртме палăртнă улшăну ĕç стажне 15 çула çитермен çынсене те пырса тивет. Çак категорие кĕрекен хĕрарăмсем пенсие 68 çулта, арçынсем 70 çулта тухĕç.

Тĕл пулăва хутшăннисене чылай ыйту хумхантарчĕ. Вĕсем ял хуçалăхĕнче ĕçлесе пысăк стаж пухнисене çăмăллăхпа тивĕçтерессипе, срокран маларах тухма май пур мелсемпе кăсăкланчĕç.

Черетлĕ ыйтупа – йăлари хытă каяша турттарса тухассипе – вырăнти ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Андрей Мясников паллаштарчĕ. Вăл каланă тăрăх, малашне пирĕн республикăра йăлари хытă каяша турттарса тухассипе тата ăна тирпейлессипе çĕнĕ йĕркепе ĕçлеме тытăнĕç. Ку енĕпе регион операторне палăртнă. Вăл - «МВК «Экоцентр» организаци.

Асăннă организаципе çынсен килĕшӳ тумалла тата вĕсем пурнăçланă ĕçшĕн уйăхсерен тӳлемелле пулĕ. Тӳлев пропискăра миçе çын тăнинчен килет. Енчен те малтан хваттерте миçе çын пурăннине мар, çак ĕçшĕн лаптăкне кура тӳленĕ пулсан, малашне пропискăна пăхĕç. Çапла вара ытларах çын ытларах çӳпçап кăларнине кашниех ăнланма тивĕç. Пĕр çын пуçне уйăхне 74,44 тенкĕ тӳлемелле пулĕ. Ку тарифа республика шайĕнче çирĕплетнĕ.

Енчен те пропискăна тăнă çын йышĕ чакать е ӳсет пулсан, çакăн пирки çийĕнчех ертсе пыракан компание е ТСЖ-на пĕлтермелле. Регион операторĕ нумай хваттерлĕ çуртрисемпе танах ялти çынсемпе те пĕр шайра ĕçлĕ. Çĕнĕ йĕрке октябрĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕме пуçламалла.

Асăннă çĕнĕлĕх пирки те çынсен тĕрлĕ ыйту çуралчĕ. Йăлари хытă каяша йăлтах хуçалăхра çунтаратăп е манăн нумай пухăнмасть тени кунта вырăнлă пулма пултараймасть.

Район администрацийĕн ĕçченĕ Андрей Степанов пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх объекчĕсем хĕле хатĕрленнипе, федерацин «Развитие телерадиовещания в Российской Федерации на 2009 – 2018 годы» тĕллевлĕ программине пурнăçланипе тата ытти ыйтупа паллаштарчĕ.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Строительство

Çурт-йĕр тума ирĕк илмелле пулмĕ

2018 çулхи августăн 3-мĕшĕнчи 340-ФЗ номерлĕ Федерации саккунĕпе тата 342-ФЗ номерлĕ Федерации саккунĕпе Раççей Федерацийĕн 2004 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнченпе вăйра тăракан 190-ФЗ номерлĕ Градостроительство кодексне улшăнусем кĕртнĕ. Улшăнусенчи хăш-пĕр самант уйрăм кил-çурт лартас текенсене те пырса тивет.

Çавна май кун пирки район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе – капиталлă строительствăпа общество инфраструктурине аталантарассин пайĕн пуçлăхĕпе Алексей МАТРОСОВПА калаçрăм.

– Алексей Николаевич, уйрăм çурт-йĕр хăпартакана, апла пулсан ялти кашни çынна тенĕ пекех, пырса тивекен улшăнусем мĕнлисем?

– Уйрăм çурт-йĕр лартма панă çĕр лаптăкĕ çинче е хушма хуçалăх тытса пыма тивĕçтернĕ çĕр лаптăкĕ çинче пурăнмалли уйрăм кил-çурт лартас текенĕн, çавăн пекех коллективлă садсенчи лаптăк çинче пурăнмалли е сад (дача) пĕртне тăвас текенĕн Градостроительство кодексне кĕртнĕ улшăнусемпе килĕшӳллĕн малашне строительство ĕçĕсене пурнăçлама ирĕк илни кирлĕ пулмасть.

Çак ĕçе пĕлтерӳ (уведомлени) мелĕпе ирттермелле. Градостроительство кодексĕн 51.1 статйинче палăртнă тăрăх, пурăнмалли уйрăм кил-çурт тăвас текен çыннăн çакăн пирки унччен строительство ĕçне пурнăçлама ирĕк панă органа, пирĕн тĕслĕхре – ял тăрăхĕн администрацине, пĕлтермелле. Ял тăрăхĕн администрацине е харпăр хăйĕн каймалла, е МФЦ урлă, е заказ мелĕпе янă çырупа почта урлă, е патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕ урлă пĕлтермелле.

– Уведомление мĕн палăртса çырмалла?

– Çурт-йĕр хăпартас текенни уйрăм çын пулсан, уведомление çыннăн ятне, хушамачĕпе ашшĕ ятне, пурăнакан вырăна тата личноçа çирĕплетекен документăн реквизичĕсене кăтартни пулмалла.

Организаци пулсан, уведомление организаци ятне тата вăл ăçта вырнаçнине, çавăн пекех юридици сăпатне патшалăх пĕрлехи реестрĕнчи регистраци номерне тата налук тӳлекенĕн идентификаци номерне кăтартмалла.

Çавăн пекех уведомление çĕрĕн кадастр номерĕ (пур пулсан), адресĕ е çав çĕр участокĕн вырăнне палăртни пулмалла.

Çурт тăвас текенĕн çав çĕр лаптăкĕ унăн (е темиçе çыннăн) харпăрлăхĕнче пулнине çирĕплетекен сведенисене палăртмалла.

Уведомление çĕрпе усă курмалли ене тата капиталлă строительство объекчĕ мĕн пулнине (уйрăм çурт-йĕр е сад пӳрчĕ) кăтартса çырмалла. Тума планланă е реконструкци туса иртерме шутланă объектăн калăпăшне кăтартмалла тата вăл чикĕрен миçе метрта вырнаçнине пĕлтермелле.

Пурăнмалли уйрăм кил-çурт е сад пӳрчĕ куçман пурлăхăн темиçе уйрăм объект çине пайланмасса та хыпарламалла.

Çурт-йĕр тăвас текенпе çыхăнмалли адреса е электрон адреса кăтартмалла тата çыхăну мелне палăртмалла.

– Уведомление сведени чылай. Апла пулсан çурт тăвас текенрен урăх нимĕнле документ та ыйтмаççĕ пулĕ?

– Çĕр лаптăкĕ харпăрлăхра пулнине патшалăхăн пĕрлехи реестрĕнче регистрацилемен пулсан, çав çĕр лаптăкĕн право документчĕсем кирлĕ пулаççĕ. Вĕсене çын харпăр хăй тĕллĕн кăтартмасан, вырăнти хăй тытăмлăх органĕн виçĕ ĕç кунĕ хушшинче документа тивĕçлĕ органтан ыйтса илмелле.

Çурт тăвас текен çын уведомлени çитерме хăйĕн представительне янă пулсан, çав представителĕн полномочине кăтартакан документ та кирлĕ пулать.

Тума планланă объекта федерации е регион шайĕнчи истори пĕлтерĕшлĕ территорире хăпартма шутланă пулсан, унăн тулашĕ мĕнле пулассине çырса кăтартни те кирлĕ.

– Çак уведомление ял тăрăхĕн администрацийĕнче миçе кунра тишкереççĕ?

– Ял тăрăхĕн администрацийĕ уведомлени илнĕ хыççăн 7 кун хушшинче пулас строительство ĕçĕн параметрĕсене тишкерет. Чи малтанах – çĕрпе усă курмалли ен тата вырăнта çĕрпе усă курассин тата ун çинче строительство ĕçĕсене пурнăçламалли правилăсемпе килĕшсе тăнине. Çакăн хыççăн ял тăрăхĕн администрацийĕ хăйĕн йышăнăвĕпе çынна уведомлени урлă паллаштарать.

Пулас объект йĕркепе килĕшсе тăманнине палăртсан, уведомлени копине строительство тĕлĕшĕнчи патшалăх надзор органне ярса параççĕ.

Асăнса хăвармалла, уведомленисен формине РФ Строительство министерстви çирĕплетĕ. Хальлĕхе вĕсене Градостроительство кодексĕнче палăртнă йĕркепе килĕшӳллĕн çыраççĕ.

– Çын малтан тунă объект калăпăшне кăна пысăклатас тет пулсан та уведомлени çырмалла-и?

– Çапла. Уведомление çав йĕркепех çырмалла.

– Çурт-йĕр хăпартас текен çын ял тăрăхĕн администрацийĕнчен килĕштерӳ уведомлението илчĕ пулсан, унăн строительство ĕçĕсене хăçан тытăнма юрать?

– Ял тăрăхĕн администрацийĕнчен килĕштерӳ уведомлението илни е ăна пачах та илменни те çынна строительство е реконструкци ĕçĕсене тытăнма ирĕк парать. Паллах, хăйĕн уведомленинче кăтартнă сведенисене шута хумалла. Строительство е реконструкци ĕçĕсене уведомлени янăранпа 10 çул хушшинче туса ирттермелле.

– Строительство ĕçĕсене вĕçлени пирки те ял тăрăхĕн администрацине пĕлтермелле пулĕ?

– Строительство (реконструкци) ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн пĕр уйăх иртиччен вырăнти ял тăрăхĕн администрацине унччен асăннă мелсенчен пĕринпе усă курса строительство ĕçĕсем вĕçленни çинчен пĕлтермелле. Уведомленипе пĕрле объектăн техпланĕ те пулмалла. Çĕр участокĕ темиçе çын харпăрлăхĕнче пулсан, харпăрлăхри пĕрлехи объектăн пайĕсене палăртнин килĕштерĕвĕ те кирлĕ.

Строительство 2018 çулхи августăн 4-мĕшĕччен пуçланнă пулсан, планланă строительство пирки калакан уведомление 2019 çулхи мартăн 1-мĕшĕччен çырса пама ирĕк пур. Ку тĕслĕхре строительство ĕçĕсене иртерме ирĕк илни те, объекта эксплуатацилеме тытăнма ирĕк илни те кирлĕ мар.

Уведомление вырăнти хăй тытăмлăх органĕ çавăн пекех 7 кун хушшинче тĕрĕслесе тишкерет. Хыççăн хăй тытăмлăх органĕ строительство ĕçĕсене пурнăçлакан çынна килĕштерӳ уведомлението пани е пулас объект палăртнă параметрсемпе килĕшсе тăманни, е ăна çав çĕр лаптăкĕ çинче тума юраманни çинчен калакан уведомление çитерменни килĕшӳ вырăнне шутланмалла.

– Çĕр лаптăкĕ çинчи строительство ĕçĕсем вĕçленмесĕрех çĕр лаптăкĕн харпăрçи улшăнать пулсан?

– Харпăрçă улшăннине пăхмасăрах строительство ĕçĕсене пурнăçламалли право улшăнмасть. Объект калăпăшĕ тĕлĕшĕнчен улшăнусем тумалла пулсан кăна каллех уведомлението тухмалла пулать.

– Алексей Николаевич, Эсир пулас объект палăртнă параметрсемпе килĕшсе тăманни е ăна çав çĕр лаптăкĕ çинче тума юраманни çинчен калакан уведомление надзор органне çитерес йĕркене пуррине каларăр. Çав уведомлени копийĕ надзор органне çитни строительство ĕçне пурнăçлакана мĕнле чăрмав кӳрет?

– Çакăн пек уведомлени копийĕ надзор органĕнче пулни малашне объект тĕлĕшпе учетпа регистраци ĕçне тума чармалли сăлтав шутланать. Çакăн пек сăлтав шутне 2019 çулхи мартăн 1-мĕшĕнчен тытăнса çурт-йĕр тăвакан уведомлени çитерес йĕркене пăхăнманни те кĕме тытăнать. Унччен кадастр учечĕпе регистраци тапхăрне уведомленисĕрех тухма ирĕк пур.

– Калăпăр, надзор органĕ унти уведомлени тăрăх строительство ĕçне пурнăçлакан çынна объекта çирĕплетнĕ йĕркепе килĕшӳллĕн туса çитерме е пăсма ыйтать пулсан, тăкака кам е мĕн шучĕпе саплаштараççĕ? Саплаштараççĕ пулсан, паллах.

– Надзор органĕн, пулас объект пирки çитнĕ уведомлени тăрăх, апла пулсан строительство ĕçне пурнăçласси çирĕплетнĕ йĕркепе килĕшсе тăманнине палăртнăран, строительство ĕçне пурнăçлакан çынна объекта çирĕплетнĕ йĕркепе килĕшӳллĕн туса çитерме е пăсма ыйтма право пур. Çакăн пек лару-тăру должноçри çыннăн айăпĕпе пулса тухнине суд çирĕплетет пулсан çеç тăкака муниципалитет йĕркеленĕвĕ туллин саплаштарма тивĕç. Строительство ĕçне пурнăçлакан çын йĕркене хăй пăхăнман пулсан, хăйĕнех тăкакланма тивĕ.

– Тавах тĕплĕ калаçушăн.

Н. НИКОЛАЕВА.

Республикăра

Штраф укçи – çул-йĕр фондне

2019 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисене пăснăшăн шыраса илнĕ штрафсем Чăваш Республикин çул-йĕр фондне куçма тытăнаççĕ.

Çакăн пирки калакан саккун проектне Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн черетлĕ сессийĕнче йышăннă. Хальхи вăхăтра çакăн пек штрафсен укçи-тенки республика бюджетне куçать.

Çапла 2017 çулта çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисене пăснă çынсем штраф тӳленипе Чăваш Республикин бюджетне пурĕ 428 миллион тенкĕ кĕнĕ.

Çулсем çинче фото- тата видеосăнав пурри водительсен дисциплинине ӳстерме, çавна май пулса иртекен аварисене асăрхаттарма пулăшать. Хальхи вăхăтра республикăра фото- тата видеосăнавăн 151 стационар комплексĕ, çавăн пекех куçса çӳрекен 36 комплекс ĕçлеççĕ.

Комплекссене авари е инкек пулакан вырăнсене тата яланах хăрушлăх кăларса тăракан вырăнсене лартаççĕ, пулма пултаракан инкексене асăрхаттараççĕ.

Каласа хăвармалла, штраф укçи-тенки çул-йĕр фондне куçни регион тата муниципалитет пĕлтерĕшлĕ çулсене тытса тăма, юсама, вĕсем çинче капиталлă юсав ĕçĕсем ирттерме, çĕнĕ çулсем тума тата ытти ĕçе пурнăçлама тăкакланĕ.

2018 çулта Чăваш Республикин çул-йĕр фончĕ 5042,6 млн тенкĕпе танлашать.

Хамăр инф.

Патшалăх услугисем

Врач патне – черетсĕрех

Патшалăх тата муниципалитет услугисен пĕрлехи порталĕн меллĕхĕпе малалла паллаштаратпăр. Паян калаçу портал урлă врач патне çырăнмалли пирки пулĕ. Иртнĕ кунсенче редакцие шăнкăравланă Вера ятлă хĕрарăм та шăпах çак услугăна электрон мелпе мĕнле тивĕçессипе интересленчĕ.

Апла порталпа усă курса врач патне мĕнле çырăнмалла-ха? Ыйтăва Муркаш район тĕп больницин поликлиника регистратуринче çăмăллăнах хуравларĕç.

Больницăри ĕçченсем ăнлантарнă тăрăх, порталта регистрациленнĕ çыншăн нимĕнле йывăрлăх та çук. Порталта «запись к врачу» услугăна суйласа илмелле. Çак услугăна электрон мелпе илессине палăртмалла.

Хыççăн поликлиникăна суйласа илмелле, врача. Çапла вара экран çинчи бланка электрон мелпе тултармалла. Ĕçе пурнăçлама медицина страхлавĕн полисĕн номерне пĕлни кăна кирлĕ.

Врач патне йышăнăва тепĕр çынна та (ачана, ватă çынна) çырма пулать. Çакна валли вĕсен даннăйĕсене пĕлни тата полис номерĕ, пур пулсан – СНИЛС номерĕ те кирлĕ.

Çак услугăна тивĕçнĕ хыççăн врач йышăнăвне çырăннă талона пичетлесе кăларма та пултаратăр.

Тĕрлĕ сăлтава пула çак мелпех черете пăрахăçлама е ăна урăх вăхăта куçарма та май пур.

Электрон мелпе врач патне çырăнса больницăна палăртнă вăхăта çитмелле кăна, черетре тăма тивмест.

Аса илтеретпĕр, пĕр тăхтамасăр е çийĕнчех медицина пулăшăвĕ кирлĕ чухне пĕрлехи номерсемпе шăнкăравламалла – 112 тата 113.

Сывлăхлă пулăр.

Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.

Росреестрта

Çĕр участокĕн хуçи кам?

Пĕрре пăхма çĕр участокĕ усă курманскер пек курăнать пулин те, çакă вăл унăн харпăрçи пачах çукки пирки каламасть. Вăл уйрăм çыннăн та, çавăн пекех муниципалитетăн та пулма пултарать. Енчен те эсир саккуна пăсмасăр юнашарти çĕр участокĕпе усă курса хăвăрăн çĕр участокне пысăклатасшăн пулсан, чи малтанах юнашарти участокăн харпăрçине шыраса тупас пулать. Унпа сутнин-туяннин е аренда килĕшĕвне тума тивет. Хыççăн вара харпăрлăх правине регистрацилес пулать.

Çĕр участокĕ камăн харпăрлăхĕнче пулнине шыраса тупма майсем пĕрре кăна мар. Чи ансатти – кӳршĕсенчен ыйтса пĕлме пулать. Участок хула е ял территорийĕнче пулнă чухне çаппла тума май пур. Енчен те вăл сад юлташлăхĕн территорийĕнче пулсан вара юлташлăх председателĕнчен ыйтса тĕпчеме пултаратăр. Ун патĕнче юлташлăх членĕсен пур даннăйĕсем те пулма кирлĕ.

Хăш чухне вара чи çывăх кӳршисем те участок пирки тĕппи-йĕрĕпе пĕтĕмпех пĕлме пултараймаççĕ. Тен ăна сутса янă, харпăрçи улшăннă т. ыт. те. Кун пек чухне тулли информацие куçман пурлăхăн пĕрлехи патшалăх реестрĕнчен (ЕГРН) ыйтса илес пулать. Çаппла тума объектăн тĕрĕс адресне е куçман пурлăх объекчĕн кадастр номерне пĕлмелле.

Çак тĕрĕс информацие тупма май килмест пулсан, Росреестрăн электрон сервисĕ – кадастрăн публичнăй картти пулăшма пултарать. Паллă мар харпăрçăна шыраса тупасси участокăн кадастр картти çинчи вырăнне тата унăн кадастр номерне палăртассинчен пуçланать. Шырав ĕçне ансатлатас тесен, кӳршĕ участокĕн кадастр номерне пĕлме тивет. Ăна шырав «чӳречине» кĕртмелле. Кӳршĕри участок картта çинче курăнать пулсан, «хуçасăр» объекта та çăмăллăнах шыраса тупма май килет. Кайран вара участок хуçи кам пулнине палăртма ЕГРН выпискине саккас памалли кăна юлать.

ЕГРН выписки официаллă документ шутланать. Унта харпăрлăх хуçи пирки информаци те, çĕр участокĕн характеристики те, вăл шутра участокăн кадастр номерĕ, мĕнле тĕллевпе усă курмалли, лаптăкĕ, кадастр хакĕ пĕтĕмпех пур. Выписка çавăн пекех куçман пурлăх объекчĕ тĕлĕшпе харпăрлăх правине чикĕлени пирки те сведенисем пулаççĕ.

ЕГРН выпискине МФЦ офисĕсенче ыйтса илме пулать. Çакна Росреестрăн официаллă сайчĕпе усă курса та тума май пур. Выписка илесси тӳлевлĕ. Сведенисене кадастр палати йĕркелет.

М. ИВАНОВА.

Пирĕн календарь

Альпа тăвĕсем урлă

Сентябрĕн 24-мĕшĕ – Раççей çар историйĕн паллă кунĕ. 1799 çулхи сентябрĕн 24-мĕшĕнче Александр Васильевич Суворов ертсе пыракан вырăс çарĕсем Швейцарири Сен-Готард перевалĕпе Альпа тăвĕсем урлă каçни паттăрлăх тĕслĕхĕ пулса тăрать. Кун пекки халиччен историре пулман.

Хĕле хатĕрленсе

Хуçалăх ĕçлекенсене кĕтет

Кĕр кунĕсем çитнĕ май, ял хуçалăх предприятийĕсенче выльăх-чĕрлĕхе хĕллехи тапхăра хатĕрлес ĕç пырать. Хĕл кунĕсенче выльăх йышне упраса хăварасси, продукци туса илессине тата асăннă отрасль рентабельлĕхне ӳстересси тĕпре тăрать. Планпа палăртнă тупăша туса илессинче апат пахалăхĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çаксене тĕпре тытса ял хуçалăх предприятийĕсем выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕллехи тапхăра хатĕрлес ĕç епле пынине тишкерме район шайĕнче ĕç ушкăнĕ çирĕплетнĕ.

Çак кунсенче район администрацийĕн экономика пайĕн АПК енĕпе ĕçлекен тĕп эксперт специалисчĕ Татьяна Павлова, районти ăратлăх енĕпе ĕçлекен зоотехник Ирина Михайлова **(сăн ӳкерчĕкре иккĕмĕш, виççĕмĕш)** «Путь Ильича» агрофирма, Суворов ячĕпе хисепленекен, Чкалов ячĕпе хисепленекен, Ильич ячĕпе хисепленекен тата «Ударник» хуçалăхсен территорийĕсене çитсе курчĕç.

Чи малтанах «Путь Ильича» агрофирмăна çитме май килчĕ. Район администрацийĕн экономика пайне тăратнă кăтарту тăрăх, хуçалăхра çак уйăх пуçламăшĕ тĕлне пĕтĕм выльăх-чĕрлĕх йышĕ 730 пуç ытла. Пире «Путь Ильича» агрофирмăра комплекс ертӳçин апат-çимĕç енĕпе ĕçлекен çумĕ Елизавета Костина **(сулахайри)** кĕтсе илчĕ. Территоринче япăх мар, хыт-хура ешерни çук. Ферма ĕçченĕсем сарайĕнче тăрăшаççĕ, тирпейлеççĕ, механизаторсем – техника таврашĕнче.

Пĕчĕк пăрусем тата ĕнесем сарайĕнче тăраççĕ, пĕр çул шайĕнчисем – картишĕнче. Çак кунсенче, йĕпе-сапа тата сивĕ пуçланиччен, вĕсене шала кĕртме палăртаççĕ. Ĕнесем пăруласси япăх мар.

Елизавета Костина каланă тăрăх, хуçалăх хĕл тапхăрне хатĕр, сарайсенче ăшă тытса хăварассипе тимлеççĕ. Хĕл каçма апат çителĕклĕ янтăланă. Ферма территорине утă, улăм çителĕклĕ турттарса тултарнă. Çанталăк панипе усă курса уй-хиртен мĕнпур улăма йăлтах пухса кĕртесшĕн. Сенажа 5 траншея хывса хăварнă.

Хальхи тĕп апат – сенаж, рацион тĕрлĕ хутăшпа пуян, вăл шутра пурă, тăвар тата ытти витамин. Выльăх умĕнче апат, комбикорм çителĕклĕ. Çак кунсенче силос валли кукуруза çулма тухма палăртаççĕ.

Тĕп чăрмав – ĕçлекенсем çителĕксĕрри. Елизавета Костина палăртнă тăрăх, пăрусем пăхакансем кирлĕ. Вăл каланипе ĕç условийĕсем те, шалу парассипе те лару-тăру япăх мар, парăмсене татнă. Услови тенĕрен, çакна та палăртса хăварас килет, эпир пынă вăхăтра çутă сарайĕнче радиопа юрлани аякранах илтĕнетчĕ.

Ĕç ушкăнĕ пĕтĕмĕшле лару-тăру япăх маррине палăртрĕ, хăш-пĕр сĕнӳ парса хăварчĕ.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.
Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

Çемье

Ачан çемьере ӳсмелле

Çемье пирĕн обществăн тĕп никĕсĕ пулса тăрать, унăн ăнăçлăхĕ обществăн пĕтĕмĕшле лару-тăрăвĕпе тӳрремĕнех çыхăннă. Статистика кăтартăвĕсене тишкерес пулсан вара çемьесенче йăлтах килĕшӳллĕ марри те курăнать.

Район территорийĕнче те мăшăрсем уйăласси çав-çавах пĕчĕк мар. Район администрацийĕн ЗАГС пайĕн кăтартăвĕ тăрăх, январь–август уйăхĕсенче 91 çемье чăмăртаннă, шел пулин те, çак тапхăрта 42 мăшăр уйрăлнă. Ытти тапхăрта та арканнă çемье йышĕ пĕрлешнин çурри шайĕнче пулса пырать. Ку питех те пăшăрхантаракан кăтарту, мĕншĕн тесен, пĕтĕмĕшле илсен, вĕсенче кĕçĕн çулхи ачасем ӳсеççĕ. Çемье арканнă май, ача чун-чĕри аманать, унăн умне пысăк суйлав тухса тăрать.

Çемье ача сассипе телейлĕ пулсан, ача-пăча та ашшĕ-амăшĕ çумĕнче кăна хӳтлĕхпе ăнлану тата çывăх çыннăн ăшшине туйма пултарать. Шел пулин те, тĕрлĕ сăлтава пула йывăрлăха лекнĕ ачасем те пирĕн хушăра тупăнаççĕ. Район администрацийĕн опекăпа попечительство секторĕн ертӳçи Наталия Смирнова ку енĕпе хăйĕн шухăшне çапла палăртрĕ:

– Ача çут тĕнчене килнипе танах ашшĕ-амăшĕ хăйĕн тивĕçне пурнăçласси малти вырăна тухать. Çемье кодексĕпе килĕшӳллĕн ашшĕ-амăш тивĕçĕ ача вун сакăр çул тултариччен шутланать, анчах та çакă пĕр-пĕрин хушшинчи ырă хутшăнăва пăрахăçлассине пĕлтермест. Енчен те ача сывлăх енĕпе кăлтăк пуртан хăйне пăхма пултараймасть пулсан, ăна малашне те ыттисен тимлĕхĕ кирлĕ.

Енчен те ашшĕ-амăшĕ хăйĕн тивĕçне пурнăçламасть, ачана хĕсĕрлет пулсан, ун йышшисен яваплăх тытма тивĕ. Ачана тивĕçсĕр ашшĕ-амăшĕпе пĕрле пулни хăрушлăх кăларса тăратма пултарассине шута илсе, опека секторĕн ĕçченĕсен кулленхи ĕçре тивĕçсĕррисене ашшĕ-амăшĕн правинчен хăтарас тата чикĕлес мелсемпе усă курма тивет. Çак ĕçсене суд йышăнăвĕпе çирĕплетеççĕ.

Кăçал опекăпа попечительство секторĕ ашшĕ-амăшĕн тивĕçĕнчен хăтарас, чикĕлес тĕлĕшпе район судне ыйтупа 5 хутчен тухрĕ, вăл шутран пирĕн 4 ыйтăва тивĕçтерчĕç, 3 амăшне праваран хăтарчĕç, 1 правине чикĕлерĕç.

Ашшĕ-амăшĕн тивĕçне пурнăçламан хăш-пĕр çынна уйрăммăн палăртни ытлашши пулмĕ. Хорнуй ял тăрăхĕнчи пĕр амăшĕн икĕ ача. Вăл вĕсене пăхса ӳстерет тесе калама май çук, ачасене хĕрарăмăн амăшĕ пăхать.

Мĕн курса ӳсеççĕ-ха ачасем? Вĕсен аслисем эрех ĕçсе харкашнине курма тивет. Ачасем ытларах чухне тулта, мĕншĕн тесен пӳртри лару-тăру вĕсем валли мар. Çуркуннехи–çуллахи вăхăтра кăна мар, хĕлле те тулта е пĕлĕш-тăванĕсем патĕнче пулма тăрăшаççĕ.

Амăшĕ ачасен вĕренĕвĕпе, шкул пурнăçĕпе пачах та кăсăкланмасть, шкулти пухусене хутшăнмасть. Ачасен каникул вăхăтĕнчи канăвне йĕркелессишĕн тăрăшмасть. Хĕрарăм лагере кайма та ӳркеннĕ пулас, ачисене илме асламăшĕ кайнă.

Хĕрарăм хăйĕн вăхăтне Оринин ял тăрăхĕнчи арçынпа ирттерет. Унта та ĕçкĕ, ӳсĕрле вара харкашу, хирĕçӳ тухасси каламасăрах паллă ĕнтĕ. Çаппла вара хĕрарăмăн ачасем валли вăхăт «юлмасть».

Профилактика канашĕнче çак çемьене пĕрре мар сӳтсе явнă, çул çитменнисемпе ĕçлекен комисси учета илнĕ. Хĕрарăм çын вĕрентсе каланине, пулăшас тенине итлемест. Ĕç вырăнĕ те сĕнсе пăхрăмăр, ăна ӳкĕте кĕртме çук.

Опекăпа попечительство секторĕ çакăн пек çынсемпе кĕрешет, ун йышши çемьесенчи ачасен хăтлă пурнăç условийĕ пултăр тесе тăрăшать. Эпир малашне те ун йышшисемпе çирĕп кĕрешĕпĕр, район хаçатĕнче вĕсем пирки те çутатса тăрăпăр.

Р. ИЛЛАРИОНОВА
каласа.

Сăмах – выльăх тухтăрне

Тимлĕрех пулни пăсмасть

Вăхăт календарĕпе тавралăхра кĕркунне хуçаланнă тапхăрта пĕрлешӳллĕ кооперативсенче тата килти хушма хуçалăхсенче ял çыннисен ĕнесем тĕлĕшпе тимлĕхе ӳстересси малти вырăна тухрĕ.

Иртнĕ кунсенче выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станции ялта пурăнакан хĕрарăм ĕнен хырăмĕ хăпарса кайни пирки хуйхăрса пĕлтерчĕ. Нумай кĕттермесĕрех пулăшма вырăна тухрăмăр. Мĕн куртăмăр-ха унта? Кил хуçи хĕрарăмĕ ĕнене пан улми, çăнăх, кăшман çулçи тултарса панă. Хĕрарăмăн пăшăрханăвĕ мĕнрен пуçланни (вулакан та ăнланчĕ пулĕ) туллин куç умне тухрĕ. Çавăнпа та кĕркунне ĕнесем кӳпĕнесси пирки те калаçма вăхăт.

Сисмерĕмĕр те, кун тăршшĕ пилĕк сехет çурă кĕскелчĕ. Кĕркунне вăй илсе пынăран çанталăк çумăра каясси те, ир-каç тăм ӳкесси те вăрттăнлăх мар. Хирсем пушаннă май çĕр ĕçченĕ хаш сывлать, хăйне канлĕрех туйма пуçлать. Умри ĕçĕсене вăхăтра пурнăçланă ĕçченшĕн ку лайăх пулăм. Тĕрĕссипе çапла пулмалла та. Анчах канлĕх туйăмĕпе хавхаланса тимлĕхе çухатни кĕр мăнтăрĕпе питех те хакла ларма пултарать. Сăмах кунта хирсем ирĕкленнипе тимлĕхе çухатнă кĕтӳçсем ĕнесене клевер-люцерна анисене кĕртсе выльăхсене кӳпĕнтерсе яни пирки. Кунашкал тĕслĕхсем районта çулленех пулнине шута илсе асăрхаттару кирлех тесе шутлатăп. Вăл никамшăн та ытлашши пулмĕ.

Кăçалхи кĕр пуçланнă тĕле районта 15372 пуç мăйракаллă шултра выльăх пулнă. Вăл шутран ĕнесем – 7656 пуç. Ĕнесен кĕтĕвне сыхласа хăварни малашлăхри тупăш пирки ĕмĕтлентерет. Çавăнпа та кĕр мăнтăрĕпе туллин савăнма ку таранччен ӳстернĕ выльăха тĕрĕс-тĕкел пăхса хĕле кĕртесси, унран ытларах тупăш илесси – выльăх-чĕрлĕх пăхакансем умĕнче тăракан хальхи тĕллев.

Кĕркунне ĕнесем кӳпĕнсе кайса вилме пултарни пурне те канăçсăрлантарать. Малаллахи сăмахăм çакăн çинчен пулнăран, хаçат вулакансене асăннă инкекрен сывăх вăхăтра уйрăмах асăрханмаллине пĕлтеретĕп. Иртнĕ çулсенче те çак вăхăтра ĕнесем кӳпĕннĕ тĕслĕхсем районта пĕрре-иккĕ мар пулчĕç пулсан, кăçал та ялсенче кун пек инкек тĕслĕхĕсем пур. Çавна пула хăш-пĕр хуçасен кĕтмен çухатусем тӳсме тивет. Çакă малашлăха пăхакан çĕр ĕçченĕшĕн – курăмлă кăлтăк.

Паян хирте кĕртрисен калчипе клевер-люцерна кайăвĕ çеç ешерсе ларать. Çакна пĕлсе выльăх пăхакансен асăрханулăха самай ӳстермелле. Ку вăхăтра фермăсенче те, уйрăм çынсен те ĕнесене ирпе-каçпа типĕ утăулăм çителĕклĕ пама тăрăшмалла. Кĕтӳçсен вара ĕне кĕтĕвне клевер-люцерна анисем çине ирхи сывлăмра тата çумăрлă çанталăкра пачах кĕртме юрамасть. Çав анасем çине кĕтĕве кĕске самантлăха кĕртсе кăларсан та ĕнесене çийĕнчех шăварассинчен асăрханмалла. Тăм ӳксессĕн вăл пусăсенче çӳрессинчен пачах пăрăнни – кĕтӳçсемшĕн тĕп çăмăллăх. Çавăнпа пĕрлех ĕнесене выльăх кăшманĕн çулçине те нумай пама тăхтамалла. Ĕнесене кĕркунне талăксерен 80 – 100 грамм тăвар пани вĕсемшĕн усăллă çеç пулнине асра тытăр.

Кӳпĕннĕ ĕнене пирвайхи пулăшу пама пĕлни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çакна валли кĕтӳ пăхакансен çумĕнче обязательнăй йĕркепе сĕт кислоти, çунтарнă магнези, тимпанол, мăн хырăма шăтарса сывлăш кăлармалли трокар пулмалла. Çак хатĕрсене килти хушма хуçалăхсенче тытни те кирлĕ вăхăтра ял çыннишĕн ытлашши пулмĕ.

Мĕн тумалла-ха ĕне кӳпĕнсен? Инкек тӳсекен выльăха малтанах 10 – 15 грамм сĕт кислоти, 160 – 200 грамм тимпанол, 20 грамм çунтарнă магнези памалла. Çунтарнă магнезипе сĕт кислотине çур литр шыва ярса ирĕлтермелле. Тимпанол – усă курма хатĕр препарат. Вĕсем пулмасан ĕнене 2 – 3 литр тин кăна сунă сĕт ĕçтермелле та кӳпĕннĕ вырăна сивĕ шыв ярса тăмалла.

Кӳпĕннĕ ĕнене пирвайхи пулăшу панă вăхăтра обязательнăй йĕркепе выльăх тухтăрне чĕнмелле. Кунта çакна та асăрхаттаратăп. Ял çыннисен хăйсен ĕнисене инкекрен страхлани пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кăçалхи тĕслĕхсенче Росгосстрах хăйĕн патĕнче страхланнисене кашнинчех вăхăта тăсмасăр тӳлесе татрĕ, тӳснĕ инкеке саплаштарчĕ.

Ăнлантăр пулĕ, кӳпĕннĕ ĕнене пулăшу париччен ку инкекрен асăрханма çăмăлрах. Ăна касу çӳрекенсемпе кĕтӳ пăхакансен тăтăшах асра тытасса шанас килет.

И. НИКОЛАЕВА,
выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцири выльăх тухтăрĕ.

Пĕлме

Районта та ĕç вырăнĕсем пур

Хальхи вăхăтра çамрăксем валли ĕç сахал е çук тесе калакан чылай. Çапах та вĕсен шухăшĕ ĕç çук тессипе мар, ĕç укçин калăпăшĕ пĕчĕкки тенипе ытларах пĕр килет пулĕ.

Халăха ĕçпе тивĕçтерекен Муркашри центрта вакансисен списокĕ кĕске мар. Сентябрĕн 17-мĕшĕнчи даннăйсем тăрăх, унта 200 ытла ваканси пуррине пĕлтернĕ.

Çыннăн ĕçлес кăмăл пур пулсан, вăл ытла пысăках мар ĕç укçи тӳлекен вырăнта ĕçе тытăнма хатĕр: пурăнмалла, çемье пур пулсан ăна тăрантармалла.

Пысăкрах ĕç укçиллĕ ĕç вырăнĕсем те Муркаш районĕнче çук мар. Вăл шутра акă хальхи вăхăтра шалти ĕçсен районти пайĕнче те полицейскисен вакансийĕсем пур.

Официаллă сайтра пĕлтернĕ тăрăх, шалти ĕçсен пайне 18 çул тултарнă çынсене ĕçлеме илеççĕ (ыйтса пĕлмелли телефон 62-9-60). Шалти ĕçсен органĕсенче ĕçлекенсен çăмăллăхсем пур пирки ĕçе вырнаçас текен çыннăн 35 çултан аслă пулмалла маррине те пĕлтернĕ. Паллах, çирĕп кăмăл, ăнтăлу тата çирĕп сывлăх пулмалла. Тепĕр тесен, хĕсметре пулнă çыннăн ку тĕлĕшпе ыйту тухса тăмалла та мар.

Ĕç шыракан çын тĕрлĕ мелпе усă курать, çавăнпа та хальхи вăхăтра предприятисемпе организацисен, тĕрлĕ структура органĕсен сайчĕсене тишкерме ӳркенмелле мар.

Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.

Акци

Ачасене асăрхаттараççĕ

Сентябрĕн 22 – октябрĕн 22-мĕшĕсенче Муркаш районĕнче «Полици тата ачасем» ятпа профилактика акцийĕ пырать. Районти çул çитменнисемпе ĕçлекен инспекторсем шалти ĕçсен пайĕн ытти сотрудникĕпе пĕрле çак тапхăрта шкулсене çитеççĕ.

Ачасемпе тĕл пулса вĕсем асăрхаттару калаçăвĕсем ирттерме палăртнă. Калаçу теми тĕрлĕ енлĕ. Çапла полицейскисем ачасене преступлени тăвассинчен асăрхаттараççĕ, сиен кӳрекен сайтсем пирки, административлă йĕркене пăснин яваплăхĕ пирки аса илтереççĕ.

Вĕренӳ çулĕ пуçланнă май ачасене каçпа урамран 22.00 сехетчен кĕмеллине, уроксене сăлтавсăр сиктерни учета илесси патне çитернине те аса илтереççĕ. Çулйĕр хăрушсăрлăх правилисем пирки каланă май, ачасен тумĕ е портфелĕ çинче çутта каялла сирекен хăюсем пулмаллине асăрхаттараççĕ.

И. ИГНАТЬЕВА,
çул çитменнисемпе ĕçлекен инспектор.

Оринин халăх театрне йĕркеленĕренпе – 100 çул

«Учителĕн çурма артист пулмалла, эпĕ вара артист та пулса курнă»

Çапла шӳтлесерех калать паян районти хисеплĕ педагогсенчен пĕри Геннадий Конузин.

Оринин халăх театрĕ пурăннинче, аталаннинче унта тӳпе хывакан районти тата унăн тулашĕнчи кашни çыннăн тӳпи пур. Çавăн пекех театр пурнăçне хутшăннă тапхăр та кашни çыннăн пурнăçĕнче хăйне евĕр аса илӳ хăварать, пĕлтерĕшĕпе палăрса тăрать.

Çатракассинче çуралса ӳснĕ, халĕ унти шкулта физика предметне вĕрентекен Геннадий Конузинăн **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре)** пурнăçĕнче те çаплах.

Геннадий Ильич Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн 1977 çулта направленипе Оринин шкулĕнче ĕçлеме тытăнать. Çавăнта вăл çичĕ вĕренӳ çулĕ кăна ĕçлет, апла пулин те вăл тăрăхри пурнăçа активлă хутшăнать.

Геннадий Ильич аса илнĕ тăрăх, çав вăхăтра Оринин театрĕн ĕçĕсем хавшакрах пынă тапхăр пулнă. Çирĕп коллектив тытăнса тăман. Çапла иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче ăна, çамрăк специалиста, шкул директорĕ театра выляма илсе каять. Халăх театрĕн ятне тивĕçнĕ коллективăн çав хисеплĕ ята хӳтĕлеме вăхăт çитсе пынă-мĕн, анчах спектакльсене вăл вăхăтра тăтăшах хатĕрленмен иккен.

– Çавăн чухне пĕртен-пĕр роле вылярăм Оринин халăх театрĕнче. Нумайăнах пулман эпир, ултă-çичĕ çын. Тихăн Петĕркки «Çĕрлехи çиçĕм» пьеси тăрăх лартнă спектакльте эпĕ чухăн çын ачин рольне вылярăм **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)**, – аса илчĕ Геннадий Ильич.

Пичĕ çине ăшă кулă тухни, сăмахĕсене ăшшăн калани сцена çинчи «пурнăç» ăна кăмăла кайнине ăнланма йывăр пулмарĕ.

Хăйĕнпе пĕрле спектакльте вылякансене те аса илчĕ: шкул директорĕ Столяров, Тереç ялĕнчен Люба, Зоя Константиновна, массовкăра шкул ачисем пулнă. Сăнарсем нумаях пулман спектакльте. Спектакльне те вĕсем хăйсем тĕллĕнех хатĕрленнĕ. Çынсем умне тухма хăнăхас тесе районти тĕрлĕ кĕтесе çитнĕ. Хӳтĕлевччен икĕ-виçĕ спектакль маларах кăна Шупашкартан режиссер килсе пулăшнă. Çапла Оринин сцени çинче халăх театрĕн ятне нумай çынран тăман хастар коллектив чыслăн хӳтĕлесе хăварнă.

Геннадий Ильичăн сцена çинче малашне те выляс шухăшĕ пулнă, анчах тепĕр спектаклĕнче малтанхинчен те сахалрах çын вылямалла пулнăран ăна валли роль пулман.

1984 çулта Геннадий Конузина Кашмаш шкулне ертсе пыма шанаççĕ. Çавăнтанпа вăл унта 14 çул директорта тимлет, ачасене пĕлӳ парать.

1998 çултанпа – Çатракасси шкулĕнче. Пултаруллă физик, чăн-чăн педагог. Ачасем ăна питĕ килĕштереççĕ. Хăйĕн предмечĕпе кирек мĕн ыйтсан та ниçтан та информаци илмесĕрех тулли хурав паракан вĕрентекене такам та хисеплет паллах. Çавăнпах ĕнтĕ, тивĕçлĕ канура пулнине пăхмасăрах, вăл паян та шкулта. Тепĕр тесен, хавхаланса урок ирттерекен, ачасене тарăн пĕлӳ паракан вĕрентекен пурри вăл тивĕçлĕ канура пулнинчен чылай пысăкрах пĕлтерĕшлĕ...

Театр унăн пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăннипе кăсăклансан вара Геннадий Ильич тӳрех татăклă хуравламарĕ.

– Вăл вăхăта эпĕ яланах аса илетĕп. Спектакль вăхăтĕнче тунă сăн ӳкерчĕке те телефона кĕртнĕ, – терĕ кăна.

Сцена çинче хăй мĕн пултарнине, хăйĕн пур ăсталăхне кăтартма унăн вăхăчĕ çителĕклĕ пулман текен шухăшпа тухрăм Çатракасси шкулĕнчен.

Тивĕçлĕ канăва тухсан пурнăç пуçланать кăна, тет мар-и-ха нумайăшĕ?

Н. НИКОЛАЕВА.

Полици хроникинчен

Трактор айăплă-ши, водитель айăплă-ши?

Транспорт хатĕрĕсен списокне тăвас пулсан, шел пулин те, унта трактора кĕртес мар текенсем те тупăнма пултараççĕ. Акă Мăн Сĕнтĕртен Ильинкăна каякан çулпа пынă трактор водителĕ те çавсен йышĕнчен темелле.

